ХЫПАР
1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă
# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ
13 (759) №, 2014, ака (апрель), 4 – 10 Хакĕ ирĕклĕ
12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/ака уйăхĕн 3-мĕшĕ тĕлне/

| ПАХЧА ÇИМĔÇ | |
|---|---|
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕр улми | 20-30 |
| Купăста | 22-23 |
| Сухан | 28-30 |
| Кишĕр | 20-32 |
| Ыхра | 100-130 |
| Хăяр | 50-100 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25-28 |
| Помидор | 40-120 |
| Пылак пăрăç | 120 |
| Тăварланă хăяр | 70 |
| Йÿçĕтнĕ купăста | 70 |
| Симĕс сухан | 65-70 |
| УЛМА–ÇЫРЛА | |
| Пан улми | 30-65 |
| Исĕм çырли: хĕрли | 50-120 |
| хури | 60-80 |
| симĕсси | 60-140 |
| Апельсин | 50-55 |
| Лимон | 60-75 |
| Банан | 55-60 |
| Груша | 55-80 |
| Мандарин | 50-75 |
| Шур çырли | 120 |
| ÇĂНĂХ–КĔРПЕ | |
| Тулă çăнăхĕ | 20-25 |
| Вир кĕрпи | 26 |
| Хура тул –“– | 29 |
| Тулă –“– | 15-19 |
| Маннă –“– | 19-25 |
| Рис –“– | 35-39 |
| Пăрçа | 22 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 34 |
| Сахăр /катăкли/ | 48 |
| Пыл | 350 |
| АШ-КАКАЙ | |
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Пăру ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 160-250 |
| Сурăх ашĕ | 200-350 |
| Пĕвер | 100-140 |
| Пÿре | 40 |
| Чăх ашĕ | 110-198 |
| Салă | 100-200 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 37-58 |
| ПУЛĂ | |
| Шăнтнă скумбри | 100-170 |
| –“–“– сельдь | 85-90 |
| Мойва | 75-80 |
| Çăрттан | 130 |
| Тăварланă сельдь | 85-95 |
| СĔТ–ТУРĂХ | |
| Сĕт /литр/ | 35 |
| Хăйма | 100 |
| Тăпăрч | 160-180 |
| Сыр | 85-300 |
| Услам çу | 180-200 |

## Хальхи ĕçсем



# Çурхи сада им-çамласси

Çанталăк ăшăтсан, туратсем çинче пĕрремĕш папкасем курăнма пуçласан сад-пахчари йывăç-тĕме, ун айĕнчи лаптăксене им-çампа сирпĕтмелле.

**Йывăççене извеç шĕвекĕпе пĕрĕхни.** Çак им-çампа «шуратнă» йывăç-тĕм ахаль чухнехинчен 5-7 кун каярах çеçке çурать, çакă вĕсене çурхи тăм ÿкнĕ вăхăтра упрама пулăшать. Извеç сĕчĕ туратсене çÿхе сийпе хуплани вĕсем çинче хĕл каçакан сиенлĕ хурт-кăпшанкă личинкисенчен, куколкăсенчен, кăпшанкăсем хывакан çăмартасенчен хÿтĕлет.

Ирĕлчĕке хатĕрлеме ансат: тин çеç сÿнтернĕ 1-2 кг извеçе 10 литр шывра ирĕлтермелле.

**Кăвак шĕвекпе им-çамлани.** Çак ĕçре 3 процентлă бордос шĕвекĕпе (ешĕл сенкерпе) усă кураççĕ. Вăл йывăç-тĕме кăмпа чирĕсенчен хÿтĕлет.

Пĕр-пĕр кĕленче е эмаль савăтра ăшă шывра уйрăмшаррăн 300 г пăхăр купоросĕ тата 400 г извеç шĕвекĕ ирĕлтермелле. Пĕрмаях пăтратнă май пăхăр купоросĕн ирĕлчĕкне çинçе пĕрхĕмпе извеç шĕвекĕ çине ямалла. Шыва пĕтĕмпе 10 л ирĕлчĕк хатĕрлемелĕх илмелле.

**Мочевина хушнă супăньпе кĕл ирĕлчĕкĕ.** Ăна çапларах хатĕрлемелле: 1-1,5 кг кĕле 10 л шыва ярса вĕретмелле. Сивĕннĕ хыççăн сăрăхтармалла. Усă курас умĕн 15-25 г шĕвĕ симĕс супăнь хушмалла. Çак ирĕлчĕкпе йывăç вуллисене те, вĕсен айĕнчи лаптăка та им-çамламалла.

### Ватă сад валли

Ун пек чухне вăйлăрах препаратсемпе усă курмалла. Сăмахран, 30В ятлă препарат питĕ витĕмлĕ. Вăл улмуççи, груша, чие, слива, виноград, крыжовник, хурлăхан, хăмла çырли çинче хĕл каçакан тĕрлĕ хурта пĕтерет. Çуркунне папкасем уçăличчен сывлăш температури 4 градусран кая мар ăшă тăнă вăхăтра пĕрĕхмелле.

### Им-çама çак виçепе илмелле:

- крыжовник, хурлăхан, хăмла çырли валли – 10 л шыв пусне 300 мл;
- улмуççи, груша, чие, слива валли – 10 л шыв пусне 300-400 мл;
- цитрус çимĕçĕсем валли (çуркунне ир-ирех) – 10 л пусне 300-400 мл;
- илемĕшĕн ÿстерекен йывăç-тĕм валли – 10 л шыв пусне 400 мл;
- виноград вуллисем валли – 10 л шыв пусне 170-300 мл.

Çак им-çам экологи тĕлĕшĕнчен сиенсĕр. Вăл туратсем çинче хĕл каçакан сăтăрçăсен çăмартисемпе личинкисене пĕтерет. Çавна май йывăç-тĕм çуркунне харăс вăранса хăвăрт ÿсме тытăнать.

30В препарата неорон, фозолан, фосфамид им-çампа, çавăн пекех контактлă фунгицидсемпе – бордос шĕвекĕпе, купрозанпа, хоруспа – пĕрле те усă курма юрать.

### Йывăç таврашĕнчи лаптăксене им-çамласси

Сад ăстисенчен чылайăшĕ йывăç айĕнчи лаптăка тата тăкăннă çулçăна 5-7 процентлă мочевина ирĕлчĕкĕпе (10 л шывра 500-700 г) им-çамлать. Мочевина шатра чирĕн возбудителĕсене пĕтерме пулăшать. 10 тăваткал метр лаптăк валли 2,5 л ирĕлчĕк илмелле. Çак им-çампа пĕрĕхни çимĕç йывăççĕсемпе çырла лаптăкĕсене азотпа пуянлатма та пулăшать.

## Торф "тÿминчи" ÿсен-тăран



**Сутлăхра торф таблеткисем пур. Вĕсемпе мĕнлерех усă курмалла, çак хутăш калчасене сиенлемест-и?**

**Валентина КОШЕЛЕВА.**
Шупашкар районĕ.

Торф таблетки – 8 сантиметр анлăш, 3 сантиметр хулăнăш преслана торф. Унăн пĕр енче тарăнах мар путăк вырăн пур. Хатĕр çак формăн ырă енĕсем сахал мар, торф структури сывлăша лайăх куçма, тымарсем патне йĕркеллĕ çитме май парать. Унăн тытăмĕнче тутлăхлă япаласем çителĕклĕ пулнăран калчасене тĕрлĕ япаласемпе пуянлатма кирлĕ мар.

Усă курас умĕн торф таблеткине пĕр-пĕр ывăс çине путăк енĕпе çÿлелле туса вырнаçтармалла, лĕп шывпа шăвармалла. Тепĕр çур сехетрен таблетка шÿсе çÿлелле çĕкленет, цилиндр пек пулса ларать.

Путăк вырăна темиçе вăрă хумалла та çиелтен çĕрек тăприпе хупламалла. Торф цилиндрне кантăкпа е полиэтилен пленкăпа витсе теплица евĕр туса вырнаçтармалла. Тăррине касса пăрахнă пластик савăт е пăралукпа карса çиелтен пленкăпа хупланă виткĕç те каять. Калча ÿссе тымарлансан торф цилиндрне йăран çине е теплицăна куçарса лартмалла.

## ÇĔНĔЛĔХ!

**Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен "ХЫПАР" хаçата электрон мелĕпе çырăнса илме пулать. Çур çуллăх хак – 90 тенкĕ. Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра.**

## Çырăнтару

# Ака уйăхĕн 9-мĕшĕччен – йÿнĕ хакпа

**«Хыпар» – 460 тенкĕ те 86 пус;**
**«Хыпар - шăмат кун» – 218 тенкĕ те 96 пус**

**«Хыпар» Издательство çурчĕн ытти кăларăмне те йÿнĕ хакпа çырăнма васкăр.**

## Пĕлетĕр-и эсир?

- *Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче пăрахнă пĕрремĕш бомба Берлин зоопаркĕнчи жирафа кăна вĕлернĕ.*
- *Пĕрремĕш аптека пирĕн эрăри 1000 çулта Багдад хулинче уçăлнă.*
- *Шăл тасатмалли щеткăна Китайра 1498 çулта тунă, ăна сысна шăртĕнчен хатĕрленĕ.*
- *Экологин пĕрремĕш катастрофи Исландире, унта викингсем вырнаççан, пулса иртнĕ. Хальхи вăхăтра Исландире пĕр вăрман та çук.*
- *Ака (апрель) уйăхĕн 1-мĕшне АПШра – «ухмахсен кунĕ», Шотландире – «куккук кунĕ», Францире «пулă кунĕ», Японире – «пукане кунĕ», Испанире «айвансен кунĕ» теççĕ.*
- *Тĕнчери пĕрремĕш кафе-мороженăя 1672 çулта Парижра Франческо Прокопьо ди Кортелли уçнă. Унта Дидро тата Вольтер çÿренĕ.*

## Вулакансен ыйтӑвӗсене хуравлатпӑр

### ШЫВ ҪУЛӖ ҪИЕЛТЕ...

**Кирпӗч купаласа ҫурт-йӗр лартасшӑн. Анчах эпир суйласа илнӗ лаптӑк ҫинче шыв ҫулӗ питӗ ҫывӑхра...**

**П.ВОЛКОВ.**
Элӗк районӗ,
Элӗк ялӗ.

Ҫырура эсир «дренаж мӗнле тумалла» тесе ыйтнӑ. Чӑн та, ҫӗр айӗнчи шыв ҫулӗсем ҫывӑхра пулсан дренаж тытӑмӗ – чи шанчӑклӑ меслетсенчен пӗри. Ӑна тӗрӗс йӗркелесен путвала, тӗп сакайне ҫуркунне е вӑйлӑ ҫумӑр хыҫҫӑн шыв кӗмест, ҫурт никӗсӗ те ҫирӗп ларать. Дренаж – ҫӗр айӗнчи шыв ҫулне аяккалла яни. Пӑрӑх валли керамика, асбоцемент е ытти материалтан ӑсталанӑ хатӗрсем юраҫҫӗ. Теприсем ятарласа пусӑ чаваҫҫӗ, ҫавна май шыв ҫулталӑкӗпех пӗр ҫӗре пухӑнать, тӗп сакайне е путвала кӗмест, никӗсӗ те арканмасть. Ку ӗҫсем шыв ҫулӗ 1 метр аяларах пулсан вырӑнлӑрах.

Тепӗр меслет вӑл – ҫурт лартмалли вырӑна вӗтӗ чул, хӑйӑр, тӑм, тӑпра тӑкса ҫӗклесси. Ҫывӑха ҫака, хурӑн лартса хӑвармалла – вӗсем ытлашши нӳрӗке туртса илеҫҫӗ. Ҫак меслет шыв ҫулӗ ытла ҫывӑхра мар чух вырӑнлӑ. Ҫумӑр, ҫурхи шыв пухӑнмалли пусӑсене ӑҫта чавасси, мӗнле пӑрӑхсемпе усӑ курасси лаптӑк уйрӑмлӑхӗнчен, вырӑн еплерех тайлӑмра пулнинчен килет. Ҫавӑнпа та ку тӗлӗшпе хаҫат ӗҫченӗсем питӗ тӗплӗ хурав параймаҫҫӗ.

### САККУНСЕНЕ СӖМСӖРРӖН ПӐССАН...

**Пӗлтӗр ҫулла Чулхула тӑрӑхне кайса ӗҫлерӗмӗр. Унтан хура кӗркунне тин таврӑнтӑмӑр. Хӗрарӑмсем ҫӗр улми, сахӑр кӑшманӗн пуссине ҫумларӗҫ, пахча ҫимӗҫ кӑларчӗҫ, арҫынсем тӗрлӗ хуралтӑ хӑпартрӗҫ. Хуҫи эпир вырӑна ҫитсенех паспортсене пуҫтарса илчӗ. Ку тӗрӗс-и?**

**А.МИРОНОВА.**
Етӗрне районӗ.

Халӗ вӑйра тӑракан саккунсемпе килӗшӳллӗн Раҫҫей Федерацийӗн гражданинӗн паспорчӗ тӗп документ шутланать. Унта хушаматпа ята, ашшӗ ятне кӑтартнисӗр пуҫне, ҫын хӑҫан тата ӑҫта ҫуралнине, ӑҫта пурӑннине палӑртнӑ, т. ыт. те.

Паспорта турса илнӗшӗн саккуна пӑсакана штраф тӳлеттереҫҫӗ, ҫапла темиҫе хутчен те хӑтлансан тата ҫирӗпрех майпа явап тыттараҫҫӗ. Штраф виҫи ӗҫ укҫин чи пӗчӗк танлашма пултарать. Ку йӗркене «Раҫҫей Федерацийӗнче административлӑ правӑна пӑсни ҫинчен» калакан кодексӗнче ҫирӗплетнӗ /19.17 статья/.

Ҫавӑн пекех паспорта салука хӑварма та юрамасть. Ҫӳлерех асӑннӑ тӗслӗхре документа салука илни мар туртса илни пулать. Паспорт яланах унӑн хуҫи аллинче пулма тивӗҫ. Унсӑрӑн унпа тӗрлӗ ултавҫӑ усӑ курма пултарать: кивҫен укҫа илме, япала туянма т.ыт.те.

### ТАВЛАШУЛЛӐ ЯПАЛА СИКСЕ ТУХРӖ...

**Пурнӑҫра пӑтӑрмахлӑ ыйту сиксе тухрӗ. Ҫавна пула Чӑваш Енри пурлӑх енӗпе ӗҫлекен кантура кайма тивет. Вӑл ӑҫта вырнаҫнӑ?**

**В.ЖУКОВА.**
Патӑрьел районӗ.

Куҫман пурлӑхпа усӑ курассипе ҫыхӑннӑ ыйтусене (тавлашуллӑ лару-тӑру сиксе тухсан) ҫак управлени татса пама тивӗҫ. Унӑн тули ячӗ ҫапла: Раҫҫей Пурлӑх министерствин Чӑваш Республикинчи управленийӗ. Вӑл ҫак адреспа вырнаҫнӑ: Шупашкар, Мускав проспекчӗ, 2. Почта индексӗ 428018, ыйтса пӗлмелли телефон – 58-10-77.

### КӐРЛАЧРА АЧА ҪУРАТРӐМ...

**Шалу укҫи сахал пирки юлашки вӑхӑтра икӗ ҫӗрте ӗҫлеме тивет. Ҫавна май ыйту сиксе тухрӗ: ача ҫуратнӑшӑн паракан пособи илме ӑҫта каймалла? Ача кӑрлач уйӑхӗнче ҫут тӗнчене килчӗ.**

**Ю.РЯБЧИКОВА.**
Шупашкар районӗ.

Кун пек чухне Раҫҫей Федерацийӗн 2006 ҫулхи раштав уйӑхӗн 29-мӗшӗнче йышӑннӑ 255-мӗш саккунне тӗпе хураҫҫӗ. Унӑн вун виҫҫӗмӗш статйинче ҫапла палӑртнӑ: темиҫе ҫӗрте тӑрӑшнӑ чухне пособи виҫине тӗп ӗҫре кӑна тӳлеҫҫӗ. Ку йӗрке чирлесен (вӑхӑтлӑха ӗҫлеме пӑрахсан) паракан пособие те пырса тивет.

## ҪАНТАЛӐК

| | кӑнтӑрла | ҫӗрле |
|---|---|---|
| 04.04 | + 3 | 0 |
| 05.04 | + 1 | – 2 |
| 06.04 | + 2 | – 6 |
| 07.04 | + 4 | + 1 |
| 08.04 | + 3 | – 5 |
| 09.04 | + 1 | – 6 |
| 10.04 | + 1 | – 2 |

## КУН ТӐРШШӖ

| | Уйӑх | кунӗ |
|---|---|---|
| 04.04 | 13.19 | 6 у.к. |
| 05.04 | 13.24 | 7 у.к. |
| 06.04 | 13.29 | 8 у.к. |
| 07.04 | 13.33 | 9 у.к. |
| 08.04 | 13.38 | 10 у.к. |
| 09.04 | 13.43 | 11 у.к. |
| 10.04 | 13.47 | 12 у.к. |

Кун тӑршшӗ 6 сехет те 47 минут вӑрӑмланать.

## Калча тӑсӑласран

Калча ытла ӳссе кайнине лайӑхах теме ҫук. Мӗншӗн тесен ытла шултра хунавӑн тымарӗсем те пысӑкланса каяҫҫӗ, чӳлмекри тӑпрара ун валли тутлӑхлӑ япаласем ҫитейми пулаҫҫӗ. Ҫавна май пахчаҫӑ ҫирӗп тымарлӑ, вӑйлӑ калча вырнне имшер, тӑсӑлса кайнӑ ӳсен-тӑран кӑна илейрет.

Калча ҫак сӑлтавсене пула тӑсӑлса каять:

– ҫур сивӗ, вӑрӑм тӑнӑран калчасене йӑрансем ҫине вӑхӑтра куҫарса лартма май килменран;

– ӳсен-тӑрана ытлашши шӑварсан, минерал удобренийӗсемпе нумай апатлантарсан;

– чӳрече анинче ҫутӑ ҫителӗксӗр пулсан.

**Ытлашши тӑсӑлса каясран ҫапларах тумалла:**

– калчасене пикировка тунӑ чух тымарӑн пӗр пайне кӑштах кӗскетмелле;

– калчасене ӳсме пулӑшакан регуляторсемпе (им-ҫампа) усӑ курмалла;

– вӑрӑсене ытла ир мар, кӑшт каярах юлса акмалла.

**Калчасем ытла ӳссе кайсан ҫакӑн пек тума сӗнеҫҫӗ:**

– ӳсен-тӑрана шӑварма пӑрахмалла, чӳлмексене сулхӑнрах ҫӗре вырнаҫтармалла;

– йӑрансем ҫине куҫарса лартнӑ чух калчан аялти пайне тӑпра ӑшне туса вырнаҫтармалла. Каярахпа тунаран ҫӗнӗ тымарсем аталанаҫҫӗ;

– хунавран темиҫе шултра турата касса илмелле, вӗсене тымарлантармалла. Каярахпа ытти калчапа пӗрле йӑран ҫине лартмалла.



## Ӳсен-тӑран пулӑшуҫисем

### Чылайлӑха кайма тивсен

**Ҫывӑх вӑхӑтра килтен пӗр-икӗ эрнелӗхе инҫе ҫула кайма тивет. Вӑхӑтра шӑварманран ҫав тапхӑрта калчасем шанса лармӗҫ-ши тесе пӑшӑрханатӑп.**

**Ольга ФАНДЕЕВА.**
Красноармейски районӗ.

Кун пек чухне яланхи ансат мелпе усӑ курма пулать. Шыв тултарнӑ пӗр-пӗр пысӑк савӑта калча ешчӗкӗнчен ҫӳллӗрех вырӑна лартӑр. Унта йывӑр япала ҫумне ҫирӗплетнӗ ҫӑм ҫиппи «ҫӑмхине» ярӑр. Ҫипсене кашни калча туни патне ҫитмелле туса ҫирӗплетӗр.

Ҫак ӗҫ чӑрмавлӑ пек туйӑнать тӑк тепӗр ансат майпа усӑ курма пултаратӑр. Хальхи вӑхӑтра лавккасене ятарлӑ гидрогель сутаҫҫӗ. Вӑл – полимер япала – акриламид. Порошок пек те, вӗтӗ пӗрчӗллӗ (гранулӑсем) те пулать. Ҫак япала нӳрӗк туртса темиҫе ҫӗр хут пысӑкланать.

Гидрогеле типӗлле тӑпрана хушмалла, унтан шӑвармалла. Калӑпӑшӗ пысӑкланнӑран тӑпра ешчӗкрен (чӳлмекрен) тухса тӑкӑнма пултарать. Ҫавӑнпа та калча тӑприне малтан шывпа нӳретнӗ гранулӑсем хушсан вырӑнлӑрах.

Гидрогель пулӑшнипе шӑвармалли тапхӑра 6 хут ытла вӑрӑмлатма пулать. Пӗр тӑваткал метр лаптӑк валли 30 грамм им-ҫам ҫителӗклӗ.


## "Терминалпа" ҫурт тӑватпӑр

### Ир килнӗ дефицит хаксене пӑсать

Реклама

*3-мӗш канаш*

***Строительство тапхӑрӗ ҫу уйӑхӗнче пуҫланнине хӑнӑхнӑ. Кӑҫал вара вӑл ака уйӑхӗн малтанхи кунӗсенчех пуҫланать-тӗр. Сӑмах строительство процесӗ пирки кӑна та мар, кирпӗч заводчӗсен кӑмӑлӗ, кирпӗч хакӗсем ӳсесси, 1-мӗш кварталта тенкӗ долларпа евро тӗлӗшпе йӳнелни лару-тӑрӑва витӗм кӳни тата ытти пирки те. Ыйтӑвӗсем ансат мар – вӗсене тишкерни вырӑнлӑ.***

Ӑшӑпа савӑнтаракан ҫанталӑк та, паллах, тӳрлетӳсем кӗртет – ҫуркунне ир килчӗ. Ялан ҫапла пулнӑ: хӗлле заводсем уйӑхсен продукцине туянакан сахаллине пула тӗпрен илсен склад валли ӗҫленӗ. Кӑҫал вара суту-илӳ нарӑсранах пуҫланчӗ, ҫакӑ чи малтан тенкӗ йӳнелнипе сӑлтавланчӗ. Урӑхла каласан халӑх, организацисем кайран хаксем тӑрукках ӳсесрен шиклене укҫине ӗҫе хывма тӑрӑшрӗҫ, хӗл вӗҫӗнче, ҫуркунне пуҫламӑшӗнче стройматериалсем туянчӗҫ. Ҫавна май **паян нумай заводӑн строительство тапхӑрӗн пуҫламӑшӗ валли хатӗрленӗ склад саппасӗсем сутӑнса пӗтнӗ ӗнтӗ.** Халӗ ҫӗнӗ саппассем пухма май ҫук, черетсем йӗркеленеҫҫӗ – вӗсем продукцие конвейер ҫинчех тенӗ пек сутаҫҫӗ.

Дефицит тавара хаклатни паллӑ. Ҫакӑнпа усӑ курманни айванла пулӗччӗ. Усӑ кураҫҫӗ те. Ҫийӗнчен строительство тапхӑрӗ пуҫланас умӗн заводсем ҫуллен хаксене ӳстерни – кун пирки кӑҫал та манмаҫҫӗ. Чӑн та, кӑҫал лару-тӑру та ҫапла тума хистет: тенкӗ хавшанине кура вӗсен валютӑпа виҫекен тӑкакӗсем ӳсеҫҫӗ – мӗн пур предприяти хутма тӑкак тӳсет. Ӑна мӗнле саплаштармалла? Продукцие хаклатса кӑна.

Ӗҫ-пуҫа стриотельство организацийӗсем хӑйсем те ҫивӗчлетеҫҫӗ. Заводсенче продукци дефицичӗ палӑрнине кура кирпӗч ҫукки ҫуллахи тапхӑрта хӑйсен ӗҫне такӑнтарма пултарассине ӑнланаҫҫӗ те – ӑна халех туянма тӑрӑшаҫҫӗ. Нумай организаци стройматериалсене шӑпах «Терминал» суту-илӳ комплексӗ урлӑ туянать – кунта кирпӗче ҫуллаччен тӳлесӗр упрама пулать-ҫке.

Кӑмӑлсӑр тепӗр самант та пур – ака уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен пысӑк тиевлӗ транспортшӑн Чӑваш Енри мӗн пур ҫула хупни иртнӗ ҫулсенчи опытран пӗлетпӗр: алписене хӑю ҫыхнӑ ҫынсем, ҫулсем ҫинчи тарасасене «хуралланскерсем», ҫак тапхӑрта аван укҫа тӑваҫҫӗ. Вӗсемшӗн те тӑкакланма тивет: транспорт тӑкакӗ ӳсет е туяннӑ материала пачах та турттарса кайма май ҫук. Сӑмах май, Чӑваш Енпе танлаштарсан кӳршӗ регионсенче халӑхшӑн та, республика экономикишӗн те сиенлӗ ҫак чару вӑйра мар. Эпир мӗншӗн япӑхрах е лайӑхрах – ӑнланма ҫук...

Кӑҫал хӑйсен ҫуртне ҫӗклеме тӗв тунӑ ҫынсенчен ытларахӑшӗ строитель профессийӗпе ҫывӑх маррине кура вӗсене лару-тӑрӑва тӗплӗ тишкерме сӗнетпӗр. Ку укҫа перекетлес тӗллевпе тӗрӗс йышӑну тума кирлӗ. «Терминал» ТК регионти стройматериалсемпе тивӗҫтерекен пысӑк база пулнӑ май яланах строительство материалӗсен пысӑк саппасӗсемпе анлӑ ассортиментне пухасине тӗпе хурса ӗҫлет. Вӗсемпе уйрӑм ҫынсене те, стриотельство компанийӗсене те туллин тивӗҫтермелле. **200 йышши тата тӗслӗ кирпӗч, газобетон, цемент тата ытти кунта яланах пур. Хаксем – заводрисем е унтан та пӗчӗкрех, ҫакӑ ҫурт-йӗр ҫӗклекенсене тӑкаксене чылай чакарма пулӑшать.**

Пирӗнпе ӗҫлени меллӗ пулнине нумайӑшӗ хаклама ӗлкӗрчӗ ӗнтӗ. **Кирпӗче тӳлевсӗр кунтах упраса кайран турттарса тухмалла туянаҫҫӗ. Кирпӗчпе газобетона «Терминал» ТК урлӑ туянасси тӑруках ӳснине кура суту-илӳ комплексӗн подразделенийӗсен кирлӗ саппассене тивӗҫтермешкӗн ҫине тӑрса ӗҫлеме тивет.** Дефицитран сыхланма май килӗ-и – шантарма йывӑр. Акӑ мӗншӗн стройматериалсем туянассине ырана хӑварни вырӑнсӑр, **строительствӑпа ҫыхӑннӑ ыйтусене паянах татса парсан ӑнӑҫу пулатех** – эпир пулӑшнипе ҫурт ҫӗклетӗрех.

«Терминала» килӗр, кунта строительствӑпа ҫыхӑннӑ мӗн пур ыйту хуравне тата пулӑшу илетӗр – тӳлевсӗр проектсемпе курттӑм хаксенчен пуҫласа ҫурт ҫӗклессипе ҫыхӑннӑ пулӑшу ӗҫӗсем таранах. Сире ҫак адреспа кӗтетпӗр: ***Шупашкар, Канаш ҫулӗ, 7/1 ҫурт, Алькеш, «Терминал» суту-илӳ комплексӗ; тел.: /8-8352/ 30-55-10, 30-55-15; www.terminaltk.ru.***

**Пирӗн филиалсен адресӗсем:**

***Ҫӗнӗ Шупашкар хули, Промышленноҫ урамӗ, 41А ҫурт; т. 8/8352/ 73-81-04;***

***Етӗрне хули, Сад урамӗ, 19А ҫурт; т. 8/83547/ 2-21-08;***

***Патӑрьел ялӗ, Уй-хир урамӗ /АБЗ территорийӗ/; т. 89871206685;***

***Ҫӗмӗрле хули, Б.Хмельницкий урамӗ, 71 ҫурт; 89279948851;***

***Улатӑр хули, Ҫӗнтерӗвӗн 40 ҫулӗн урамӗ, 83 ҫурт; т. 8/83531/ 6-14-35.***

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА

**ака, 7-13**

## 7 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.00 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
12.55 «Дело ваше...» 16+
13.35 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Остров Крым» 12+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.05 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ПОЗДНЕЕ РАСКАЯНИЕ» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Познер» 16+
1.10 Х/ф «ТУМАН» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 2.50 «Сильнее смерти. Молитва»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ДОРОГА ДОМОЙ» 12+
23.45 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
0.45 «Девчата» 16+
1.30 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

***На канале «Россия 1»***

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Местное время. Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Местное время. Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ДИКИЙ» 16+
1.30 Д/с «Наш космос» 16+
2.25 Дикий мир 0+
3.10 Т/с «ДЕВЯТЫЙ ОТДЕЛ» 16+
5.00 Т/с «ХВОСТ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĚПЕ

**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 О чувашском**
**7.28 Паянхи кун**
**7.32 Юрă çаврăмĕ**
**7.36 Çула тухсан**
**7.50 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Чĕрĕ шыв**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 8 ытлари кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
12.55 «Дело ваше...» 16+
13.35 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Остров Крым» 12+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ПОЗДНЕЕ РАСКАЯНИЕ» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Секрет вечной жизни»
1.10, 3.05 Х/ф «ДРАЙВ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Битва за «Салют» Космический детектив»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ДОРОГА ДОМОЙ» 12+
23.50 Специальный корреспондент 16+
0.50 «1944. Битва за Крым» 12+
1.55 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
3.20 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК19» 16+
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

***На канале «Россия 1»***

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Утро Чувашии**
**9.00 Ирхи тĕпел**
**9.35-9.55 Аса ил-ха, салтак**
**11.30-11.50 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Местное время. Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Местное время. Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ДИКИЙ» 16+
1.30 Квартирный вопрос 0+
2.35 Главная дорога 16+
3.05 Т/с «ХОЗЯЙКА ТАЙГИ-2. К МОРЮ» 16+
5.00 Т/с «ХВОСТ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĚПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Кăмăлтан. Ирхи концерт**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Пĕр сăвă**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Тӳсĕм**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 9 юн кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.20, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.00 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
12.55 «Дело ваше...» 16+
13.35 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Остров Крым» 12+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.05 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ПОЗДНЕЕ РАСКАЯНИЕ» 16+
23.20 «Политика» 16+
0.30 Х/ф «СОБЛАЗНИТЕЛЬ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Следы великана. Загадка одной гробницы» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ДОРОГА ДОМОЙ» 12+
23.50 «Договор с кровью» 12+
1.45 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
3.30 «Честный детектив» 16+
4.00 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК19» 16+

### ЧТВ

***На канале «Россия 1»***

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Местное время. Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Местное время. Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «Бавария» (Германия) «Манчестер Юнайтед» (Англия)
1.45 «Лига чемпионов УЕФА. Обзор»
2.15 «Дачный ответ» 0+
3.20 Т/с «ДИКИЙ» 16+
5.15 Т/с «ХВОСТ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĚПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Хамăр ял**
**6.34 Имею право**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.26 Мозаика**
**7.37 Права потребителя**
**7.43-8.00 Ирхи концерт**

* * *

**12.10 Вести-Чувашия**
**12.24 Радиопа калаçĕç. Тӳрĕ эфир**
**12.52-13.00 Столичные новости**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрă çаврăмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49 -19.00 Вести-Чувашия**

## 10 кĕçнерни кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
12.55 «Дело ваше...» 16+
13.35 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Остров Крым» 12+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.45 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ПОЗДНЕЕ РАСКАЯНИЕ» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «На ночь глядя» 16+
1.05, 3.05 Х/ф «ВЫ НЕ ЗНАЕТЕ ДЖЕКА» 18+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «На балу у Воланда. Миссия в Москву»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ДОРОГА ДОМОЙ» 12+
23.50 «Живой звук»
1.45 Т/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ»
3.30 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК19» 16+
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

***На канале «Россия 1»***

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Утро Чувашии**
**9.00 Алран кайми**
**9.15-9.55 Мехел. Республикăри ачасен чăваш юррин конкурсĕ. 2 пай**
**11.30-11.50 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Местное время. Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Местное время. Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.35 Спасатели 16+
9.05 «Медицинские тайны» 16+
9.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Футбол. Лига Европы УЕФА. «Севилья» (Испания) «Порту» (Португалия)
1.45 «Лига Европы УЕФА. Обзор»
2.15 Т/с «ДИКИЙ» 16+
4.10 Дикий мир 0+
5.10 Т/с «ХВОСТ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĚПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Юхма енĕм – Патăръел**
**6.31 Спорт площадки**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27 Открытая студия**
**7.56-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 11 эрне кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 5.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
12.55 «Дело ваше...» 16+
13.35 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Остров Крым» 12+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 4.25 «В наше время» 12+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос. Дети»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.35 Х/ф «НОЧЬ В МУЗЕЕ 2» 12+
2.30 Х/ф «ИГРА В ПРЯТКИ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Юрий Гагарин. Семь лет одиночества»
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50, 4.25 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
21.00 «Поединок» 12+
23.25 Т/ф «БАЛКАНСКИЙ КАПКАН. ТАЙНА САРАЕВСКОГО ПОКУШЕНИЯ» 12+
0.20 Х/ф «КАЧЕЛИ» 12+
2.20 Горячая десятка 12+
3.25 Комната смеха

### ЧТВ

***На канале «Россия 1»***

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Утро Чувашии**
**9.10 Юратнăран**
**9.25-10.05 Мехел. Республикăри ачасен чăваш юррин конкурсĕ. 3 пай**
**11.30-11.50 Местное время. Вести - ПФО**
**14.30-14.50 Местное время. Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Местное время. Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.35 «Паутина-7. Послесловие» 16+
0.30 Х/ф «ГРОМОЗЕКА» 16+
2.40 Т/с «ХОЗЯЙКА ТАЙГИ-2. К МОРЮ» 16+
4.35 Т/с «ХВОСТ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĚПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ăстаçă**
**7.48-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.25 Ăраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 12 шăмат кун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «УКРОЩЕНИЕ ОГНЯ» 12+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.50 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Буран» Созвездие Волка» 12+
12.15 «Открытый космос»
16.25, 18.15 Х/ф «КОРОЛЕВ»
18.55 Х/ф «ГАГАРИН. ПЕРВЫЙ В КОСМОСЕ»
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Что? Где? Когда?»
0.10 Х/Ф «ПОТОМКИ» 16+
2.15 Х/ф «ВУЛКАН» 16+
4.10 «В наше время» 12+
5.05 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

4.40 Х/ф «БЕЗ СРОКА ДАВНОСТИ»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. ВестиМосква
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет. «Заповедник «Шульган Таш» «Дубай. Город рекордов»
11.20 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив» 16+
12.25 Х/ф «ЖЕНСКАЯ ДРУЖБА» 12+
14.30 Шоу «Десять миллионов»
15.35 Субботний вечер
17.55 «Юрмала» 12+
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «ВОПРЕКИ ВСЕМУ» 12+
0.40 Х/ф «МОЯ ЛЮБОВЬ» 12+
2.50 Х/ф «ВАЛЬГАЛЛА: САГА О ВИКИНГЕ» 16+
4.40 Комната смеха

### ЧТВ

***На канале «Россия 1»***

**8.10-8.20 Местное время. Вести-Чăваш ен**
**10.05 Юратнăран**
**10.50-11.00 Шевле**
**14.20-14.30 Местное время. Вести-Чувашия**

### НТВ

5.35 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.20 «Я худею» 16+
14.25 «Таинственная Россия» 16+
15.10 Своя игра 0+
16.15 «Темная сторона» 16+
17.15 «Очная ставка» 16+
18.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
19.50 «Новые русские сенсации» 16+
20.45 Ты не поверишь! 16+
21.45 Х/ф «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ. ЭПИЛОГ» 16+
23.50 Х/ф «КОНЕЦ СВЕТА»
1.40 Авиаторы 12+
2.15 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
3.10 Т/с «ХОЗЯЙКА ТАЙГИ-2. К МОРЮ» 16+
5.05 Т/с «ХВОСТ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĚПЕ

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10 О чувашском**
**12.33 Килте пĕçерер-ха**
**12.39-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тӳрĕ эфир**

## 13 вырсарни кун

### 1 КАНАЛ

5.30, 6.10 Х/ф «МЕДВЕЖОНОК ВИННИ И ЕГО ДРУЗЬЯ»
6.00, 10.00, 12.00, 17.45 Новости
6.40 Х/ф «УКРОЩЕНИЕ ОГНЯ» 12+
8.10 «Служу Отчизне!»
8.45 «Смешарики. ПИНкод»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Вячеслав Тихонов. Разговор по душам» 12+
11.10 «Пока все дома»
12.15 «Встречаемся в ГУМе у фонтана»
13.20 «Свадебный переполох» 12+
14.20 «Вспоминая Вячеслава Тихонова» 16+
15.55 Х/ф «ДЕЛО БЫЛО В ПЕНЬКОВЕ»
18.00 «Точь-в-точь»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига 16+
0.15 Х/ф «СТРАННАЯ ЖИЗНЬ ТИМОТИ ГРИНА»
2.10 Х/ф «СКОРОСТЬ» 16+
4.20 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.15 Х/ф «ВРЕМЯ ЖЕЛАНИЙ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Смеяться разрешается»
12.40, 14.30 Х/ф «ВАСИЛЬКИ» 12+
14.20 Местное время. Вести-Москва
17.00 «Один в один»
20.00 Вести недели
21.30 Т/ф «Первая мировая. Самоубийство Европы» 16+
23.30 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
1.20 Х/ф «ДОПУСТИМЫЕ ЖЕРТВЫ» 12+
3.20 «Планета собак»
3.55 Комната смеха

### ЧТВ

***На канале «Россия 1»***

**10.20-11.00 Местное время. Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ

6.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
10.55 «Чудо техники» 12+
11.25 «Поедем, поедим!» 0+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.20 СОГАЗ Чемпионат России по футболу 2013/2014. «Локомотив» «АНЖИ»
15.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.15 Следствие вели... 16+
17.15 «Очная ставка» 16+
18.20 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа» с Кириллом Поздняковым
19.50 Х/ф «ПОСЛЕДНИЙ ДЕНЬ» 16+
23.15 Х/ф «АФРОДИТЫ»
1.05 «Школа злословия» Михаил Кукин 16+
1.55 Авиаторы 12+
2.15 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
3.15 Т/с «ХОЗЯЙКА ТАЙГИ-2. К МОРЮ» 16+
5.05 Т/с «ХВОСТ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĚПЕ

**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Сан яту-вĕрентекен**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри-мала. Хит-парад**

* * *

**18.10 Ылтăн çӳпçерен**
**18.48-19.00 Приглашение к диалогу**

## Усăллă вак-тĕвек

**Çурăк кăмака валли замазка**

Çурăлнă кăмакана саплама ятарлă замазка пулăшать. Хыр сăмалипе вĕтетнĕ тăма çурмалла илмелле, кăштах тăвар, шыв хушса хăйма пек пуличчен пăтратмалла. Çак хутăшпа кăмака çурăкне сĕрмелле. Кăмака вĕриленнĕ май çурăк вырăн хăвăрт хытать.

**Вăчăрана çĕнететпĕр**

Çĕнĕ япалари вăчăра (молни) йывăррăн усăлать тăк ăна типĕ кирек епле тутлă супăньпе сĕрмелле. Унтан темиçе хут уçмалла, питĕрмелле.

**Ал шăлли тасалать**

Хытă вараланнă ал шăллине кальциленĕ содăпа хуçалăх супăнĕ ирĕлтернĕ шывра ислетмелле, вĕретмелле. Япала тап-таса пулать.

**Солярка йĕрĕ юлмасть**

Ĕç тумтирĕ çине лекнĕ солярка вырăнĕсене тасатма «Ферри» препарат пулăшать. Япалана çумалли шыва ăна темиçе кашăк хушмалла çеç.

**Кравать чĕриклетмĕ**

Вăхăт иртнĕ май йывăç кравать шултăркаса чĕриклетекен пулать. Унăн сыпăнакан пайĕсене сукнаран тунă пăкăсем (прокладкăсем) хĕстерсен кравать ĕмĕрĕ вăрăмланать.

**Ваннăри тĕкĕр тарласран**

Ваннăри тĕкĕр тепĕр чух нӳрĕке пула хăвăрт тарлать. Ун пек пуласран тĕкĕре 1 чей кашăкĕ желатина 50 мл шывра ирĕлтернĕ хутăшпа сăтăрни пулăшать.

## Ваттисем каланă

*Пуçлăх пуçран ачашласан çӳç тăкăнмасть.*
*Кушака кулă, шăшие вилĕм.*
*Пĕлмен – пĕр сăмах, пĕлсен – çĕр сăмах.*
*Куçпа курсан урапа тар.*
*Курман-илтмен – пĕр сăмах, курнă-илтнĕ – çĕр сăмах.*
*Сĕрмен урапа йывăр кусать.*
*Тип кашăк çăвара çурать.*
*Юмăç вăл шуйттанпа пĕр май.*
*Юмăç юхăнтарнă, тухатмăш тустарнă.*

## РАБОТА

**100.Требуются** монолитчики. Т. 8-937-952-58-67.

**110.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда, вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**202.Срочно требуются штукатуры.** Большие объёмы. Оплата сдельная. Т. 8-919-670-07-00.

Факс,/8352/28-83-70.
E-mail,hypar2008@rambler.ru

реклама пĕлтерӳ

Тел:28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

## П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900р., прихожие от 3600р., шкафы от 3300р., комоды от 2300р., столы от 1000р., кровати от 4000р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 465544, 89538998224. **Сайт:** www.excomfort.ru.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 89875766562.

**5.Блоки** керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.

**6.Красноармейские КЕРАМБЛОКИ** – высококачественные, пропаренные керамзитобетонные блоки /390х190х188, 390х90х188/, произведенные на импортном оборудовании. (Доставка + манипулятор) , сухие строительные **смеси.** Тел. 89033220052.

**7.Срубы** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, сетку, арматуру.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит** – дёшево. Д-ка. Т. 389713.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**14.Станки** для **валяния валенок.** Т.: 89278617589, 8-937-381-05-85.

**15.Кирпич,** брусчатку, кольца, ОПГС, песок, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.Сетку-рабицу** от производ-ля – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Без выходных. Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**30.**Пластиковые **ОКНА, ДВЕРИ** стальные, межкомнатные. Низкие цены. Гарантия качества. **Звоните.** Т. 8-937-954-92-45.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные** – огромный ассортимент. Укладка. Т. 8-967-470-27-36.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. Бурение. Т.: 89876664140, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**50.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер. Скидки. Доставка – бесплатно. Без выходных. Т. 89370101054.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, сахар, мука. Доставка. Т. 89373916016.

**59.Семена кормовой свёклы «ЛАДА»** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т 8-927-668-95-87.

**69.ДОМ** в деревне Кошки–Куликеево Яльчикского района – **150000 руб.** Т. 8-937-954-14-55.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова, горбыль.** Т. 8-903-389-14-00.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.Срубы** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 481654.

**79.Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**108.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89196535092.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.



**126.Теплицы** из поликарбоната: 3х4, 3х6, 3х8, 3х10 – в наличии. Доставка по ЧР. Т. 8/8352/ 48-08-23.

**150.Гравмассу, песок** речной – от 10 до 25 тн. рейс, **керамблоки, керамзит.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ «БАРС».** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

**169.Блоки** керамзитобетонные, **песок, керамзит.** Т. 48-68-95.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

**177.Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, **половняк,** КББ 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**178.Цемент, гравмассу, песок.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**179.Дом** в Моргаушском районе. Т. 8-937-382-89-21.

**195.Зерно** на фураж – доставка, **МТЗ-80, пресс-подборщик.** Т. 8-909-304-08-81.

**196.Гравмассу, песок, щебень.** Дёшево. Доставка до 15 тн. Т. 8-902-328-26-67.

**200.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89613422138.

**203.ПИЛОМАТЕРИАЛ** – любой размер: доска шпунтованная, вагонка, имитация бруса; **цемент, гипсокартон,** утеплитель, крепёж. Доставка по звонку. Т. 8-937-953-90-06.

**204.Месячных бычков** на откорм по 8,5 тыс. руб. Т.: 89176641716, 89196690171.

**212.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89613429059.

**214.Теплицы из поликарбоната.** Скидки. Т. 89176548507.

**216.Шпагат сеновязальный.** Дёшево. Тел. 8-927-851-68-58.

**217.Грабли от 24 тыс. руб., плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.** Низкие цены. Всё новое! Доставка! **Тел. 8-937-388-50-89.**





СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ ЦЕНТР

**БЕТОН РАСТВОР ДОСТАВКА**

г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

www.profilch.ru
ПРОФИЛЬ ПРОФНАСТИЛ
СОБСТВЕННОЕ ПРОИЗВОДСТВО
ангары,
КОМПЛЕКТУЮЩИЕ ДЛЯ КРОВЛИ, ВОДОСТОКИ, ДЫМНИКИ
МОНТАЖ ЗАБОРОВ
тел. (8352) 22-95-45, 63-82-85

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
Изготовление в короткие сроки.
Гарантия качества
Скидки до 30 %
Тел. 89176594701.


## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т.89279993737.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**887.Закупаем КРС** по высоким ценам. Т. 89061327604.

**215.Картофель.** Т. 8-927-856-92-02.

## УСЛУГИ

**32.Наркология. Живите трезво!** Консультация бесплатно. С 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** *Лиц. ЛО 2101000928 от 13.09.13 г. МЗ СР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 89373756378, Мила.

**63.Известный чебоксарский экстрасенс, хиромант** – сниму порчу, поставлю защиту, помогу в решении семейных и финансовых проблем. Т. 89176555726.

**99.Видеонаблюдение,** автоматические **ворота.** Т. 89278636398.

**127.Автокрана** – 30 м, 25 тн, **экскаватора-погрузчика** «Volvo» BL 71 с гидромолотом. Водопровод и канализация. Т. 89674703220.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**180.Православный экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**209.Натяжные потолки** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

## РАЗНОЕ

**197.**Отзовись единомышленник старше 54 л., если тебе интересна деревня. Т. 89373704303.

## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Т. 8-917-066-41-46.


« ХЫПАР »

Учредитель:
“ХЫПАР” Издательство çуртĕ” АУ

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ ММVIII

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор – тĕп редактор
А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Редактор Т.В.ИЛЬИНА

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çуртĕ, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОН:
28-85-87, 56-00-67.
коммерци директорĕ:
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/
28-83-70.
Электрон почти:
hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федераци çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 16 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 19138. Заказ 1200.